# Пăра сăмса хӳтлĕх кĕтет



**Пăра сăмса /кулик-сорока/ çĕр-шывра пĕчĕк йышпа пурăнакан кайăк шутланать. Çавăнпа ăна Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин Хĕрлĕ кĕнекисене кĕртнĕ.**

2007 çулта республикăра – 400, çав шутра Сăр тăрăхĕнче – 250-270, Куйбышев шыв управĕн таврашĕнче – 37 /2010 ç./, Шупашкар шыв управĕн хĕрринче – 10, Мăн Çавал юхан шыв лапамĕнче 2 /2009 ç./ мăшăр йăва çавăрнă. Раççейĕн Европа пайĕнче 2001 çулта 2000-4000 шута илнĕ.

М.П.Богданов хайĕн тĕпчев статйинче 1871 çулта Сăр пусĕнче вăл час-часах тĕл пулнине, М.Т.Рузский 1893 çулта пăра сăмсашăн Сăр Хусан кĕпĕрнинче йăва çавăрмалли тĕп вырăн пулса тăнине, Б.М.Житковпа С.А.Бутурлин 1906 çулта, И.Б.Волчанецкий 1925 çулта асăннă юхан шывăн ăшăх вырăнĕсенчен чылайăшне йышăннине палăртнă. Çак шухăша П.В.Плесский 1977 çулта хайĕн статйинче çирĕплетнĕ.

Пăра сăмса ула курак пысăкăш. 420-820 грамм таять, вĕçнĕ чухне çунаттисене 80-86 сантиметра çити сарать. Сăмси хĕрлĕрех сарă, 8-10 сантиметр тăршшĕ. Ури хайĕн тĕсĕпе хĕрлĕ роза чечекне аса илтерет. Хытă чупать, лайăх ишет, хăвăрт вĕçет. Кирлĕ чухне шăвшав кăларать: кăвиррр! кăвиррр! кăвиррр! Пĕчĕк утравсенче, ăшăх юхан шывсенче, улăх-çаранра, шурлăхра йăва çавăрать. Аçипе ами мăшăрланнă хыççăн тăваттăмĕш çул кăна çывăхланаççĕ, виличченех пĕр çемьере ирттереççĕ. Чăн та, этем пурнăçĕнчи пек те пулкалать. Ами ют аçана çавăрсан е çемьере пĕри теприне пăрахсан – уйрăлаççĕ.

Чĕп кăларма ака уйăхĕн иккĕмĕш çурринче вĕçсе килеççĕ, йăва çавăрнă çĕртех çăмарта тăваççĕ. Малтан «туй» иртет. Аçи мăйне тăсса, пуçне пĕксе ами тавра ташласа кумать, сассине хăпартса кăшкăрать: кăвик! кăвик! кăвик! кăвиррр! Хайăр, тăм е вĕт чул çинче, шыв-шуртан инçе мар вырăнта йăва çавăраççĕ, çиеле кăштах типĕ курăк сараççĕ. Ами 3 çăмарта, тепĕр чухне 2-4 тăвать. Аçипе ами ăна умлăхыçлă 26-27 кун ларса ăшăтаççĕ. Çăмарташăн, чĕпшĕн касăхакан ула курак е чарлан ашшĕ-амăшĕ айккине пăрăнасса сăнасах тăраççĕ. Çавăнпа пĕри – яланах хуралта. Чĕпписем çăмартаран тухсанах уралanaççĕ, чупаççĕ, ишеççĕ. Çапах та ашшĕ-амăшне ĕлкĕрсе пыраймаççĕ. Йăвара аслисем апат çитерессе кĕтеççĕ. Вĕтĕ хурт-кăпшанкă, моллюск, ăман, ытти апат юратаççĕ. Йăваран 1,5 уйăх инçете каймаççĕ. Кайран вĕçме пуçлаççĕ, хăйсем тĕллĕнех апат тупаççĕ.

Шел те, «Сăрçи» заповедникре чĕп çуллен кăларакан 15-20 мăшăра кăна патшалăх хӳттине илнĕ. Ытти çут çанталăкăн уйрăмах сыхлакан территорийĕнче мар. Вĕсене браконьерсенчен хӳтĕлейместпĕр. Пăра сăмсана патшалăх сыхлавĕн территорине кĕртес тĕллевпе вăл йышлă пурăнакан Сăр тăрăхĕнче – Çĕмĕрлерен пуçласа Етĕрнене çитиччен – çут çанталăкăн уйрăмах сыхлакан территорине /ÇÇУСТ/ туса хума сĕнетĕп. Сăрçире Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин Хĕрлĕ кĕнекисене кĕртнĕ караппăл, сăпса хурчки, пулăç кайăк, сăпса çиен, ытти кайăк-кĕшĕк ĕрчет. ЧР Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерстви пăхса тăракан ÇÇУСТ вĕсемшĕн те усса кăна кайĕччĕ.

■ **Геннадий ИСАКОВ,**
**«Сăрçи» заповедник ĕçченĕ**